Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерствин хушма професси вĕренĕвĕн «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» бюджет учрежденийĕ

Мухтавлă ентешсен çулталăкне халаллані

«Чăвашла уяв янратăр!» конкурсĕ

НОМИНАЦИ

<u>«Класс сехечĕн сценарийĕ»</u>

ТЕМА

# «Пирĕн ентеш – Раççей Геройĕ»

Мероприятие 10-17 çулти ачасем валли хатĕрленĕ

Ĕç тĕллевĕ: 1) тăван çĕр-шыва, чĕлхене юратас туйăма аталантарма, вĕсене пур енлĕн хаклама, хисеплеме вĕрентесси;

2) тăван халăха, хамăр çĕре упрас туйăма аталантарма майсем туса парасси;

3) вăрçă этемлĕхшĕн пысăк трагеди пулнине çирĕплетесси.

Сценарин авторĕ:

Чугунова Эмма Александровна,

Шупашкар хулин 38-мĕш вăтам шкулĕн

чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ

телефон: 8-906-383-44-38

e-mail: emma_vasileva@mail.ru

ШУПАШКАР – 2022

**Ăнлантарни:** класс сехетне раштав уйăхĕн 9-мĕшĕнче, паттăрсен кунне халалласа вăтам тата аслă классенче ирттерме пулать.

**Класс сехечĕн юхăмĕ**: класра учитель ятарласа хатĕрленĕ презентацири слайдсем; паттăр ҫинчен ҫырнă литература; Леонид Сергеевич Константиновăн портречĕ.

Халăхăмăр, савнă халăх,

Ҫĕртмĕпĕр чăваш ятне,

Ĕмĕр-ĕмĕр асăнмалăх

Ҫĕклĕпĕр ун мухтавне.

Яков Ухсай

**Пирĕн ентеше Раҫҫей Геройĕн ятне панă.**

Ялăн чыс-ҫумне ҫĕклекенĕсем – унăн ҫыннисем. Енчен те вĕсем Тăван ҫĕр-шыв, тĕнче умĕнче хăйсен ячĕсене палăртмалăх чаплă та паллă ĕҫ турĕҫ пулсан, вĕсемпе пĕрлех ял мухтавĕ те ӳсет. Ку енчен илсен, Йĕпреҫ районне кĕрекен Липовка ялĕн шăпи калама ҫук телейлĕ. Ҫак ял кама кăна кăларман-ши пурнăҫ ҫулĕ ҫине? Кунтан тыр-пул ӳстерекенсем те, вăрман касакансем те, йывăҫран япала ăсталакансем те, сăвăҫпа композитор та, искусство ҫыннисем те, ачасене пĕлӳ паракансемпе маттур спортсменсем те тухман мар. Ҫак ял чапне ҫӳл тӳпе таран ҫĕклекенĕ вара Леонид Сергеевич Константинов пулнă. Шăпа ытла та кĕске кун-ҫул парнелерĕ ăна, ҫут тĕнчере хĕрĕх ҫул кăна пурăннă-ҫке. Ҫынсен пурнăҫне ҫăлса хăварнă ҫав вĕҫевҫĕ, хăй йывăр аманнă пулсан та вертолетне Чечен ҫĕрĕ ҫине антарса лартма чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕх ҫитернĕ.

Липовка посёлокĕнче ҫуралса ӳснĕ, кунти вăтам шкулта тарăн пĕлӳ илнĕ Леонид Константинов паттăрлăхĕ ҫинчен нумай хаҫат-журнал ҫырнă. Вăл Федерацин чикĕ хуралĕн службин Ҫурҫĕр Кавказ регион управленийĕн уйрăм авиаполкĕн эскадрилья командирĕ – тытса пыракан Ми-8 вертолета Чечняпа Ингушети чиккинче, Нестеровская станица ҫывăхĕнче, боевиксем персе сиенлетнĕ. Пилоткабинине сулахайра ларакан Константинов подполковник мĕн пулса иртнине тӳрех хăй те ăнланса илеймен пуль. Ҫĕр ҫинчен пулеметран пенĕ малти кантăка тĕллесе черет кăларса янă та –ултă пуля тӳрех командира лекнĕ. Экипаж командирĕ аманнă, тăхлан хулпуҫҫине, кăкăрне лекнĕ, ана управлени рычагĕсенчен ывăтса янă. Малтан туйăми пулнипе юн юхнине ăнланса ĕлкĕреймен, каллех рычагне ярса илнĕ. Вилмеллех суранланнă тата унăн экипажĕ вертолета Назрань хули ҫывăхĕнче антарса лартма пултарнă, ҫапла вара пассажирсене ҫăлса хăварнă. Константинов подполковника госпитале ăсатнă чухне ҫул ҫинчех вилсе кайнă.

Паттăрлăх кăтартнă ентешĕмĕр ҫинчен ҫырман пĕр хаҫат та юлман пулĕ ҫĕршывăмăрта. Эскадрилья командирĕ чи пысăк наградăна тивĕҫлĕ пуласси прики никам та иккĕленмен: ентешĕсем те, ҫывăх ҫыннисем те, хĕсметри юлташĕсем те. Паттăрлăх манăҫмасть, вăл халăх асĕнче ĕмĕр пурăнĕ.

Владимир Путин Указа алă пуснă хыҫҫăнах Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров пуҫ хунă эскадрилья командирĕн ашшĕ-амăшĕ тата офицер ҫемйи патне телеграмма янă: «Хисеплĕ Феодосия Александровна, Сергей Николаевич, Людмила Николаевна, Ольга тата Саша! Раҫҫей Президенчĕ Сирĕн ывăлăра, мăшăра тата аҫăра – Леонид Сергеевич Константинова Раҫҫей Геройĕн ятне пани ҫинчен Указа алă пусни ҫинчен пĕлтернине хумханчăк туйăмпа йышăнтăм. Пĕр енчен ҫакă пирĕн ентешĕмĕрĕн, ҫарти офицершăн пысăк мăнаҫлану. Тепĕр енчен, ку – вилнĕ хыҫҫăн награда пулнишĕн чун ыратăвĕ. Константинов

офицер хăйĕн тивĕçне чыслăн тата вĕçне çитиех пурнăçланă. Республика ывăлăр, упăшкăр тата аçăр пирĕн çĕр çинче çитĕннĕ чăн- чăн арçын пулнипе сирĕнпе пĕрле мăнаçланать. Ăна вăл çăлса хăварнă çынсем çеç мар, унăн мĕнпур ентешĕсем, пĕтĕм Чаваш Ен нихăçан та манмĕ».

**Вĕçев малалла тăсăлать.**

Нумай çул ĕнтĕ шавласа-кĕрлесе килекен çуркуннен çак кунĕ, ака уйăхĕн 9-мĕшĕ, Леонид Сергеевичсăр иртет. Çар вертолетне тытса пынă подполковник ĕçтешĕсене тата Патшалăх Думин икĕ депутатне вилĕмрен çăлса хăварнă. Боевиксен снайперĕ йывăр амантнăран юн нумай çухатсан та вертолета çĕр çине ăнăçлăн антарса лартнă, хыççăнах куçне хупнă.

2001 çулхи çурла уйăхĕнче ăна вилнĕ хыççăн «Раççей Федерацийĕн Паттăрĕ» хисеплĕ ята панă. Ун чухне çĕр-шыв ертӳçи Владимир Путин алă пуснă Указ халĕ Липовкăри Леонид Константиновăн музейĕнче упранать. Леонид Сергеевич Константинов районта пирĕн ентешсенчен Раççей Геройĕн ятне илнĕ пĕрремĕш паттăр, республикăра – улттăмĕш.

**Паттăр амăшĕ асаилĕвĕнчен.**

«Эпĕ Леньăна çуркунне, кайăксем кăнтăртан вĕçсе килнĕ вăхăтра çуратнă, куççуль витĕр аса илет Герой амăшĕ. Кайăк пек çунатлă пултăр ку ача тесе ăна утьăкка сиктернĕ. Ашшĕ те çав сăмахсенех калатчĕ. Турă илтрĕ пулас пирĕн тилмĕрĕве… Нумай çул ĕнтĕ асапланатăп. Черетлĕ вĕçеврен таврăннă ывăлăм пӳрте кĕрсе тăрассăнах туйăнать. Ăнланакан, шкула чупакан пулсан, тӳпене икке уйăрса вĕçсе иртекен самолет хăварнă йĕре темĕнччен сăнатчĕ. «Эпĕ вĕçевçĕ пулатăпах!»- тесе тантăшĕсем умĕнче тек-текех калатчĕ. Ялти культура çурчĕн сцени çинче Леня М.Горький мухтанă Кăйкăр сăмахĕсене хавхаланса вуласа пани асăмран нихăçан та тухас çук. Вĕсене çакăн хыççăн хам та пăхмасăрах калама вĕреннĕччĕ: «Телей эп куртăм! Тупе эпкуртăм… ăна кураймăн ман пек эс çывăх! Эх, эсĕ мĕскĕн!... Эй, тепĕр хут ман кăвак тӳпене ярăнса хăпарасчĕ…» Çакăн пек аса илет амăшĕ ывăлĕ çинчен.

Леонид Константинова хăйĕн кун-çулне вăвак тӳпепе çыхăнтарма тапĕр тепĕр витĕмлĕ сăлтав та пулнă çав: ара вăл çуралнă хыççăн виçĕ кун иртсен тĕнче уçлăхне Юрий Гагарин космонавт çĕкленнĕ-иç!

Паттăрлăх кăтартнă çыннин çутă сăнарне ентешĕсем те, эпир те, 38-мĕш шкулта вĕренекенсем асра тытатпăр. Çăлтăр пек таса ята манăç тусанĕ витменни савăнтарать. Çакалăхри ачалăх йĕрĕсене упраса хăварнă урампа пĕлӳ тĕнчине илсе килнĕ вăтам шкул Леонид Константинов ячĕпе хисепленеççĕ. Хула администрацийĕн хушăвĕпе 2015-мĕш çултанпа Шупашакар хулин 38-мĕш шкулĕ те Раççей Федерацийĕн Геройĕ ячĕпе хисепленсе тăрать. Геройăн çывăх тус-юлташĕсем тата Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ, Раççей космонавт-вĕçевçи, сумлă ентешĕмĕр Николай Бударин çине тăнипе унăн тăван ялĕнчи Константиновăн музейĕ уçăлнă.

Константиновăн мухтавлă ĕçне малалла тăсас ĕмĕтпе хавхаланакансен хушшинче паян шкулсенче вĕренекен йышлă. Ачасем çыракан сочиненисенче Çăкалăх кăйкăрĕн вилĕмсĕр паттăрлăхĕ чĕррĕн курăнса тăрать. Тĕреклĕ çунатсем илнĕ хыççăн вĕсенчен чылайăшне кăн-кăвак тӳпе илĕртесси пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленместĕп. Вĕсем хăйсен тăван кĕтесĕн чап-сумне тĕксĕнленме памĕç, Лĕня пиччĕшĕ çирĕп те чăтăмлă пулĕç, йывăрлăхсем сиксе тухсан пуçне усмĕç. Горький хайлавĕнчи Кăйкăртан тĕслĕх илсе çӳлтен те çӳлелле çĕкленĕç.

**Тĕслĕх – юнашарах.**

Хула администрацийĕн постановленийĕ тăрăх пирĕн шкул 2015 –мĕш çултанпа Раççей Геройĕн Леонид Сергеевич Константинов ячĕпе хисепленсе тăрать. Шкул музейĕнче ăна

асӑнса стенд пур. Пӗр уяв та паттӑра асӑнмасӑр иртмест, ӑна халалланӑ хумханулла та илемлӗ сӑвӑ-юрӑ йӗркисем ҫакӑнта янӑраҫҫӗ. Шкул ачисем Паттӑра асӑнса фильм ӳкернӗ. Ҫитӗнекен ӑрӑвӑн тата камран тӗслӗх илмелли пур. Раҫҫей Геройӗ яланах ҫирӗп йӗркене пӑхӑннине, спорта юратнине музейри стендсем вӗренекенсене аса илтерсех тӑраҫҫӗ.

Ҫулсерен, раштав уйӑхӗн 9-мӗшӗнче, Геройсен кунӗнче, ун ятне асӑнмасӑр иртмест. Вӗренекенсемшӗн кӑна мар, шкул ертӳҫисемпе вӗрентекенсемшӗн те ҫак кун пушшех те явaплӑ. Мӗншен тесен ҫак кун, Леонид Сергеевич хӗрӗ, Александра Леонидовна, кашни ҫул пирӗн пирӗн хӑна. Паттӑрлӑх урокӗнче подполковник хӗрӗ ашшӗ ҫулӗпе кайса Мускаври чике хурален институтӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн Шупашкарти аэропортӑн чикӗ контролӗн постӗнче вӑй хураканскер, пирӗн шкула килмесӗр тӑраймастӑп тет. Вӑл кашнинчех ашшӗ пирки хумханса та, мӑнаҫланса каласа парать.

**Липовкӑра – Герой музейӗ.**

Ака уйӑхӗн 10-мӗшӗнче Йепреҫ районӗнчи Липовкара Раҫҫей Геройен Леонид Сергеевич Константиновӑн музейне уҫнӑ. Экспозици Леонид Сергеевич вӗреннӗ ватам шкул ҫуртенче вырнаҫна. Ҫав кун поселокра хана йышлӑ пулнӑ: тӑванӗсем, пӗрле вӗреннӗ тусӗсем, ҫарти юлташӗсем, Афган вӑрҫин ветеранӗсем. Службӑри ӗҫтешӗсем, Раҫҫей ФХС авиабзинчен килсеҫтнӗскерсем, музее подполковникӑн мундирне тата вертолет макетне парнеленӗ.

Экспозицие хатӗрленӗ Чӑваш наци музейӗн ӗҫченӗсем ячӗпе ырӑ сӑмах чылай каланӑ. Чи пӗлтерӗшли, чуна пырса тивекенни, паллах, Раҫҫей Геройӗн тӑванӗсем пулнӑ. Сӑмахран, унан мӑшӑрӗ, Людмила Николаевна пӗлтернӗ тӑрӑх, экспозиципе паллашнӑ май вӑл шухӑшӗпе иртнӗ кунсене ҫӗнӗрен ҫӗнӗрен таврӑннӑ.

**Герой аса илӗвӗнчен.**

«Герой пулса ҫуралмаҫҫӗ, герой пулса ҫитӗнеҫҫӗ», - тени тӗрӗс. Эпӗ те вӗт ачаранах летчик пулма ӗмӗтленнӗ. Михаил Девятаевӑн паттӑрлӑхне ӑмсанаттӑмччӗ. Геройсем ҫинчен кӗнекесем, хаҫатсем вулаттӑм, киносем пӑхаттӑм. Ҫакна аттепе аннен воспитанийӗ те витӗм кӳнӗ-тӗр, паллах. Каярахпа, Девятаев, Кузнецов пек пултарулла ҫынсемпе час-часах тӗл пулма тӳр килетчӗ. Ҫаксем пурте ҫитӗнӳсемпе, тӗллевсене пурнӑҫлама хистенӗ пулӗ. Эпӗ хамӑн Тӑван ҫӗр-шывӑм, халӑхӑм умӗнче тупа тунине чыслӑн пурнӑҫларӑм. Тата шӑпана тав тӑватӑп.

Ҫамрӑк каччӑпа хӗрсене нихӑҫан та йывӑрлӑхсем умӗнче чарӑнса тӑмасӑр, тӗллеве пурнӑҫлассишӗн, малалла ӑнтӑлма сунатӑп, Герой пулассишӗн нумай кирлӗ мар, пурӗ те Тӑван ҫӗр-шыва, халӑха юратмалла,- тенӗ Леонид Сергеевич Константинов.

**Аса илӳсем.**

Леонид Сергеевич Константиновӑн юлташӗсем каласа панинчен:

- Пӗлетӗр-и, вӑл, чечен боевикӗсене чи нумай сиен кӳнисем – летчиксем тата десантниксем. Ҫавӑнпа пире вӗсем кураймаҫҫӗ. Персе антарнӑ вертолетшӑн вӗсене питӗ пысӑк укҫа тӳлеҫҫӗ. Ҫак инкек хыҫҫӑн Ингушети территорийӗнче те ятарлӑ операци ирттереҫҫӗ. Тӗрӗссипе каласан, Чечняпа Ингушети территорийӗ хушшинче йӗплӗ карта тытса палӑртнӑ чикӗ ҫук вӗт. Тепӗр тесен ку пӗлтерӗшлӗ те мар. Боевиксем Чечня территорийӗнчен Ингушетие каҫма пултараҫҫӗ. Тавралӑхӗ вӑрманлӑ-сӑртлӑ та – вӗсен мӗнпур сукмакне пӳлсе пӗтерейmӗн. Леонид Сергеевичӑн вертолечӗ МИ-8 засада ҫине «пырса тӑрӑннӑ». Боевиксем борт ҫинче Дума депутачӗсем пулнине пӗлнех. Тӗллесе те шӑпах экипаж командирне тӗлленӗ. Ӑна вӗлерсен вертолет ӳкетех вӗт. Ӳкет те, депутатсем те пӗтеҫҫӗ те - тӗнчене шавлаттармалли тӗслӗх пулать. Боевиксем ҫапла планланӑ-тӑр.

Боевиксем вертолет кӗтсе темиҫе талӑк ларма пултараҫҫӗ. Ҫав ҫулпа вара пирӗн машинӑсем час-часах вӗҫеҫҫӗ. Ку экипажри ытти ҫынсем, пассажирсем пирки «кӗпепе ҫуралнӑ» теме пулать.

**Александр Дубасов, Раҫҫей Федерацин чикӗ хуралӗнчи службин авиаци департаменчӗн пуҫлӑхӗ:**

- Константинов подполковнике эпӗ лайӑх пӗлетӗп. Эпир 1999-мӗш ҫулхи раштавра Аргун хутлӑхне унпа пӗрле десант антарнӑ. Кам унта пулнӑ – ҫкӑ мӗнне пӗлет. Хӑш-пӗр чух тӑхлан ҫумӑр айенче тусен хушшинчи «ҫурӑксене» кӗме тиветчӗ. Константинов чӑн-чӑн ас пулнӑ, унашкал ӗҫсене чи ӑста профессионалсене ҫеҫ шанса параҫҫӗ. Эпир ФПСӑн чи лайӑх командирне ҫухатрӑмӑр.

Вӑрҫӑ вӑл – ҫӗр йӑтайми инкек, хурлӑхлӑ куҫҫуль, ӗмӗрлӗх ҫухату…
Хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр ҫӗнтернӗ паттӑр салтаксене эпир нихӑҫан та манмӑпӑр!
Паттӑрсем халӗ те пур, малашне те пуласса шанас килет.
Никама та манман, никама та парӑнмастпӑр!